**Упа тусăм, упа тус**

Тем çиçет аннемĕн пичĕ –
Пит хаваслă ман анне!
Лавккаран вăл илсе килчĕ
Тĕлĕнтермĕш пукане.
Упа тус усмак хăлхаллă
Çăмламас ун тяпписем.
Куçĕсем чăн-чăн шăрçаллă,
Пыл пек çуллă тутисем.
Уççипе ăна лăратăп:
– Ташлама, – теп, – тух-ха, тух.
Çаврăнма пуçлать вăраххăн
Упа тусăм, упа тус.
Хăй пуçне тек пăркалать вăл,
Урлă-пирлĕ пускалать.
Айăк-майăк пăхкалать вăл,
Тутлă премĕк-ши шырать?
Аннепе эп ал çупатăп:
– Ай маттур та упа тус!
Аннене эп юрататăп,
Ман анне пек анне çук!

*Волкова, М. Упа тусăм, упа тус [сăвă] / М. Волкова // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча вали çырнă хайлавсем. – С. 260.*